... çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ИЮЛЬ 22 ЮНКУН 169(6104) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чăваш АССР-ĕнчи колхозсемпе совхозсенче кĕрхи тырăсене акма хатĕрленесси тата кĕракине ирттересси çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕн постановленийĕ

Кĕракине вăхăтра тата агротехника тĕлĕшĕнчен пысăк пахалăхпа туса ирттерни 1943 çулта вăйлă тырпул туса илмелли пĕлтерĕшлĕ условисенчен пĕри пулса тăрать.

Анчах та районсемпе колхозсен руководителĕсем кĕракине хатĕрленес тĕлĕшпе çак мĕнле пысăк вырăнта тăнине тата иртнĕ çулти ĕçсене шута илмен, çĕртме тумалли çĕрсене çĕртме тумалли ĕçсене тăсăлтарнă, кĕрхи тырăсем акмалли çĕрсене минераллă удобренисем тăвас, çавăн пекех тата çĕртме тунă çĕрсене пăхса тăвас ĕçсене организацилемен, çавна пула вĕсем кĕракине вăхăтра ирттерес ĕçе хăрушлăх умне тăратаççĕ.

Кĕракине хатĕрленнĕ çĕрти çитменлĕхсене пĕтерес, кĕрхи тырăсене вăхăтра тата лайăх пахалăхпа акса пĕтерессишĕн Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ **çапла йышăнаççĕ:**

1. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, райсоветсен исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, политотделсен начальникĕсене тата колхоз председателĕсене çĕртме тăвас ĕçе халех вĕçлеме хушас. Çумкурăк пусса илнĕ ирхи çĕртме пуссисене тепĕр хут лущильниксемпе çухаласа кăлармалла, çавăн пекех акнă çĕртме пуссисене те уборка пуçланиччен, анчах 1942 çулти августăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, ака умĕн тумалли ĕçсене пурне те туса ирттермелле; акнă çĕртме пуссисене тырпулсем пуçтарса илнĕ хыççăнах кăлармалла.

2. Çумкурăк пусман тата ытлашши пирченмен çармаран ирхи çĕртме пусси çинче çиелти хытăрах сийне кăкласа тĕпĕнче çемçетмелле, çавăн пекех çĕртме пуссисене тата вăрлăха тивĕçлĕ таран витсе хăварас майпа кĕрхи тырă акас умĕн çĕртме пуссине тĕплĕн сўрелениех çырлахма колхоз правленийĕсемпе совхоз директорĕсене ирĕк парас.

3. Çураки вăхăтĕнче хăшпĕр районсенчи уйрăм колхозсенче кондицисĕр вăрлăхсем акса йăнăш тунине шута илсе, колхозсен правленийĕсемпе районсенчи çĕрĕç пайĕсене çапла тума хушас: колхозсенчи кĕрхи тырă культурисен иртнĕ çултан куçакан мĕнпур вăрлăх фончĕсенчи тырпула тĕплĕн сортламалла тата çав вăрлăхсем акма юрăхлипе юрăхлă маррине вăрлăхсене тĕрĕслемелли лабораторисенче тĕрĕслесе тухмалла, çак ĕçсене пурне те 1942 çулти августăн 5-мĕш тĕлне вĕçлемелле. Тĕрĕслемен тата кондицисĕр вăрлăхсене акма парас мар.

Иртнĕ çултан куçакан фондсенчи кондицисĕр вăрлăхсене Заготзерно пунктĕсенче улăштармалла, çак ĕçе уборка пуçланиччен туса пĕтермелле.

Кĕрхи тырăсен иртнĕ çултан куçакан фончĕсем çителĕксĕр колхозсене колхоз председателĕсемпе совхоз директорĕсене вăрлăх акнă участоксем çинче чи лайăх тырă пулнă çĕр лаптăкĕсене суйласа илсе, вĕсене уйрăм çапас тата вăрлăх сортласа хатĕрлес ĕçсене организацилеме хушас.

4. Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, селекционнăй станцие, районсене, райсовет исполкомĕсене тата ВКП(б) райкомĕсене çапла тума хушас: селекционнăй станцие тата районсенчи сортлă вăрлăх участокĕсене вăхăтра тырпул пухса илме ... 1942 çулта колхозсенчи кĕрхи тырăсем ... селекционнăй станци райсемеменсем Госсортфонда сортлă тĕштырă памалли плана августăн 8-мĕшĕнчен кая юлмасăр пурнăçлатмалла.

5. МТС-сене, райсовет исполкомĕсене, ВКП(б) райкомĕсене тата колхозсен председателĕсене МТС-семпе колхозсенчи мĕнпур сеялкăсене, культиваторсене, лущильниксене ... çулти августăн 5-мĕш тĕлне юсаса пĕтерме хушас.

Хирĕç тухас умĕн çапла нормăпа ... кĕрхи тырăсем акнă участоксем çинче, вĕсене ытти участоксене акнинчен каярах юлса акма тивнĕ пирки, акмалли вăрлăх нормине 10 процента çити ўстермелле.

6. Кăçалхи çул кĕрхи тырăсене акмалли срока августăн 10-мĕшĕнчен пуçласа 24-мĕшне çитиччен тăвас, çакăнпа пĕрлех кĕрхи тулла кĕрекин малтанхи 3-мĕшпе 5-мĕш кунĕсенче удобрени парса çемçетнĕ ирхи çĕртме çине акмалла.

7. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе районри çĕрĕç пайĕсене кĕраки мĕнле пынине тата ака пахалăхне тĕрĕслесе тăма, колхозсенче кĕрхи тырăсем акас тĕлĕшпе тунă мĕнпур ĕçсене бригадирсемпе колхоз председателĕсем куллен кун йышăнса пырас ĕçе организацилеме хушас

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. МАТВЕЕВ

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн Секретарĕ И. ЧАРЫКОВ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине сўтсе-яваççĕ

Ватă колхозниксем те куллен тимлĕн ĕçлеççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. **(Телефонпа).** СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление районри колхозниксемпе колхозницăсем, машинно-тракторнăй станцинче ĕçлекенсем пысăк çĕкленўпе сўтсе-яваççĕ. ВКП(б) Чкаловски райкомĕпе райсовет исполкомĕ ку постановление ăнлантарса пама тата колхозсене тырпул пухса кĕртес ĕçре пулăшма партипе совет организацийĕсен районри активне ялсене ячĕç.

Енер, ĕçкунĕ пĕтнĕ хыççăн, Катекри Молотов ячĕпе тăракан колхозра колхозниксен пĕрлешўллĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Колхозниксем партипе правительствăн постановленине ырласа йышăнчĕç, тырпулсене вăхăтра пухса кĕртме кирлĕ мероприятисене палăртрĕç.

Колхоз уборкăна тухма хатĕрленсе çитсе пырать. Июлĕн 17-мĕш тĕлне 3 жнейка юсанă, кĕреплеллĕ çавасем 67 тунă, 281 çурла шăлласа хунă. Витнĕ итемсем çĕнĕ тырра йышăнма хатĕр. Урапасемпе рыдвансене те ĕçе тухма хатĕрлесе хунă, тĕштырă турттарма 186 михĕ хатĕрленĕ.

Колхоз кăçалхи тырпула 13 ĕç кунĕ хушшинче пухса кĕртме палăртнă. Халĕ колхозниксем утă çулаççĕ. Пурĕ 187 гектар çулмалла пулсан, паянхи куна 140 гектар çулнă. Тырăсене çумкурăкĕсенчен икшер хут тасатнă, хăшпĕр участоксене халĕ татах тепĕр хут çумлаççĕ. Колхоз государствăна 1942 çулта аш-какай памалли обязательствăна пĕтĕмĕшпех тултарнă.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз сортлă вăрлăх тăвать. Çавăнпа колхозниксем тырпула вырнă хыççăнах çапса пыма тимлĕн хатĕрленеççĕ. МК—1100 молотилкăна итем çине вырнаçтарса лартнă, государствăна вăрлăхлăх тырă пама 10 лаша, 10 çын уйăрса çирĕплетнĕ. Колхоз уборкăна тухнă хыççăнах кунĕн-çĕрĕн пĕр чарăнусăр авăн çапма тытăнать. Тĕштырра çапнă хыççăнах ВИВ-2 сортировкăпа сортласах тăма шутлаççĕ. Кăна тума ятарласа 8 çын уйăрнă.

Колхоз уборка ирттермелли плана тĕплĕн шухăшласа тунă. Ăна пурнăçа кĕртмешкĕн колхозниксем халĕ куллен тимлĕн хатĕрленеççĕ. Постановление ăнлантарса панă хыççăн, ĕçе ватă колхозниксем те активлăн хутшăнма кăмăл турĕç. 71 çулти ватă колхозник Г. Исаев юлташ хăйне капансем хывнă çĕре уйăрма ыйтрĕ. Ватă колхозниксем Богданов, Наперсткин юлташсем кĕреплеллĕ çавасем тăваççĕ, тырра кĕреплеллĕ çавасемпе вырма колхозницăсене вĕрентеççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

РАЙОН УБОРКĂНА ТУХАС УМĔН

ВĂРМАР. **(Телефонпа).** Районри колхозсем партипе правительствăн «1942 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленийĕпе палласнă хыççăн, уборкăна хатĕрленес ĕçе вăйлатрĕç. Паянхи куна районри 42 колхоз уборкăри ĕçсен планне тунă, ялхуçалăх машинисене юсамалли плана 92 процент пурнăçа кĕртнĕ. 170 жнейкăран 157-шне, 46 молотилкăран 40-шне юсанă, лашапа ĕçлекен кĕреплесене пурне те юсаса çитернĕ, кĕреплеллĕ çавасем 1.230 тупса хатĕрленĕ.

И. МАМОНТОВ.

Райçĕрĕç пайĕн ... агрономĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 20-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерў

Июлĕн 20-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Воронеж** районĕнче тата **Ворошиловградран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерех вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Июлĕн 19-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 40 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 85 автомашинине, 15 лавне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 8 складне тата горючи усракан 5 склада сирпĕнтерсе янă, полевой тата зенитнăй артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, пĕр транспорта сиенленĕ, противникăн пехотине 4 ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене пыра-пыра çапаççĕ. Пирĕн чаçсем Дон шывĕ урлă каçмалли темиçе кĕпере йышăнса илнĕ. Пирĕн авиаци хамăрăн çĕр çинчи войскăсене активлăн пулăшса пынă тата тăшманăн позицийĕсем çине бомбăсем пăрахса тăнă. Противник вăйлăн хирĕç тăрать, тĕрлĕ вырăнсене минăсем хура-хура тухать тата çавтери васкаса укрепленисем тăвать. Пĕр участокра пирĕн часть противника хирĕç икĕ кун хушши çапăçса, ăна каштах хĕснĕ. Çĕнĕ вăй пырса çитсен нимĕçсем, хăйсен çухатнă позицийĕсене таврăнас тесе, танксем кулăпса пынипе атака тунă. Атака тăвакан нимĕçсене пирĕн боецсем пулеметсенчен тĕл персе кĕтсе илнĕ, çавăн хыççăн вара хăйсем контратака тунă та гитлеровецсене хăваласа янă. Çак çапăçура противникăн 700 ытла салтакпа офицер, 13 танк, 5 оруди, 18 пулемет тата 10 миномет пĕтнĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвелтухăçнерех вырăнта пирĕн войскăсем оборонăллă вăйлă çапăçусем туса пынă. Совет бомбардировщикĕсемпе штурмовикĕсем противникăн танкĕсене, мотомехчаçĕсене тата пехотине пыра-пыра çапнă. Уйрăм участоксенче кăна икĕ кун хушшинче нимĕçсен 39 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 95 автомашинине, горючи тултарнă 10 автоцистернине пĕтерсе тăкнă, зенитнăй пулеметсен 10 точкине пусарса лартнă. Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче тата противникăн аэродромĕсем çинче нимĕçсен 10 самолетне персе антарнă е пĕтерсе тăкнă.

Летчик-сержант Дивиченко командир пулса ертсе пыракан самолетăн экипажĕ геройла ĕç тунă. Тăшманăн аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă чухне совет самолетне вут тивнĕ пулнă. Çулăм явăнса илнĕ пулин те, самолет питĕ аялтан вĕçсе, нимĕçсен аэродром çинчи самолечĕсене пĕтерсе пынă. Боеприпассем пĕтсессĕн тата самолета ниепле майпа та çăлса хăварма май çуккине пĕлсессĕн, Дивиченко юлташ, тăшмана юлашки хут пырса çапма шут тытса, хăйĕн çунакан машинине противникăн горючи турттарса пыракан автоцистернисен колонни çине янă. Пирĕн летчиксем нимĕçсен автоцистернисем çуннине, çавтери вăйлă тĕтĕм тата çулăм тухнине курнă. Сталинла соколсем—сержант Дивиченко, штурман Журавлев, стрелок-радист Мысиков тата воздушнăй стрелок Ершов геройсен вилĕмĕпе вилнĕ. Хăйсен пурнăçĕн юлашки минутисенче те тăван çĕршывшăн çапăçнă герой-летчиксене совет халăхĕ яланах асра тытĕ

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕн участокĕсенчен пĕринче противникăн пехотин пĕр полкĕ пирĕн оборонăн малти линине атакăланă. Пирĕн боецсем нимĕçсен атакине сирсе янă та, противникăн оборонине çав самантрах кĕрсе кайса, 20 дзота тата питĕ кирлĕ высотана йышăнса илнĕ. Каярахпа гитлеровецсем хăйсен малтанхи позицийĕсене каялла туртса илес тесе темиçе хутчен те контратакăсем туса пăхнă. Анчах та кашнинчех пысăк çухатусем тўссе каялла чакнă. Фронтăн çак участокĕсенче противникăн 200 салтакпа офицер ытла вилнĕ.

* * *

Калинин фронтĕнче вырăнти çапăçусем пулса пынă. Пирĕн боецсем тăшман çине пĕрмаях тапăнса, нимĕçсене канăç памаççĕ, тăшманăн чĕрĕ вăйне пĕтерсе пыраççĕ. Полововаров юлташăн подразделенийĕ, противник тăракан вырăна кĕрсе кайса, 35 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Гварди красноармеецĕ Черешнев 7 гитлеровеца стройран кăларнă.

* * *

Сумы облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен С. юлташăн партизанла отрячĕ противникăн карательнăй пысăк экспедицине хирĕç 3 кун хушши çапăçнă. Партизансем гитлеровецсене çапса салатнă тата пĕр бронемашина, 5 станковăй пулемет, 14 автомат, 48 винтовка, боеприпассем тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тытса илнĕ. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен 175 салтакпа офицер вилнĕ е аманнă.

* *

Пудевицри резерв госпиталĕнче пулнă нимĕç салтакĕ Франц Бригнер нумаях пулмасть Стефан Шванд ефрейтор патне çапла çырса янă: «...Пирĕн взводра 28 çынран 5 çын çеç чĕрĕ юлчĕç. Мана амантрĕç, анчах эпĕ хама телейлĕ тесе шутлама пултаратăп: эпĕ чĕрĕ юлтăм. Халех, акă, Вельца таврăнăп та килте пурăнма тăрăшăп, мĕншĕн тесен вырăссене хирĕç çапăçас ĕçрен усалраххи урăх нимĕн те çук. Кунта эпĕ госпитальре темĕн тĕрлĕ хăрушă япаласем те куртăм. Мĕн чухлĕ чăлах».

* * *

Оккупациленĕ совет районĕсенчи халăха гитлерла çынçиенсем пĕтерсе пыраççĕ. Запорожье облаçĕнчи Акимовка ятлă вырăнта нимĕçсем хĕрарăмсене, ачасене, стариксене, ватă çынсене, пурĕ 110 çынна площаде хăваласа пухнă та персе вĕлернĕ. Çак вырăнтах пĕр эсэсовец хĕрарăмăн аллинчен виçĕ çулти ачине туртса илнĕ те ачан урисемпе аллисене касса татнă, кайран ачана штыкпа чиксе вĕлернĕ.

Июлĕн 21-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерў

Июлĕн 21-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Воронеж** районĕнче тата **Ворошиловград** хулинчен кăнтăр хĕвелтухăçнерех вырăнта çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Воронеж районĕнче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Пĕр участокра пирĕн чаçсем тăшман оборонин линине татса кĕнĕ, шыв урлă каçмалли кĕпере йышăнса илнĕ, противникăн сыхăнăвне татнă. Çав вăхăтрах танкистсем гитлеровецсен тепĕр группировкине пырса çапса, халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ. Хаяр çапăçура нимĕçсен 15 танкне тата орудисемпе пулеметсем нумай пĕтернĕ, противникăн темиçе çĕр салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Тепĕр утастокра пирĕн часть нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерне, 3 танкне, 2 бронемашинине пĕтерсе тăкнă тата 5.000 минăпа снаряд тытса илнĕ.

* * *

Совет авиацийĕ нимĕç войскисен çапăçу йĕркисем çине тăтăшах бомбăсем пăрахать. Пĕр кун хушшинче пирĕн летчиксем нимĕçсен 24 танкне тата артиллерин 15 орудине пĕтерсе тăкнă, боеприпассемпе горючи усракан 7 склада сирпĕнтерсе янă тата противникăн пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 7 самолетне персе ўкернĕ.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвелтухăçнерех вырăнта совет войскисем наступлени тăвакан противника хирĕç çапăçса пынă. Пĕр участокра пирĕн боецсем нимĕçсен темиçе атакине сирсе янă. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 400 виле ытла тата персе çĕмĕрнĕ 5 танкĕ выртса юлнă. Çавăрса илес хăрушлăх килсе тухсан, пирĕн часть, командовани хушнă тăрăх, çĕнĕ рубежсем патне чакнă. Пирĕн утлă çарсем ăнăçлăн кĕрешеççĕ, вĕсем тăшман çине кĕтмен çĕртен пыра-пыра тапăнаççĕ. Çĕрле пулса иртнĕ çапăçура кавалеристсем темиçе çĕр нимĕçе пĕтерсе тăкнă, 2 танк тата 8 автомашина çунтарса янă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче артиллерирен икĕ енчен те сайра хутран персе тăнă. Пĕр участокра пирĕн артиллери нимĕçсен 2 дзотне çĕмĕрнĕ, артиллерин пĕр батарейине тата минометсен 5 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотин пĕр ушкăнне сапаласа янă. Гварди лейтенанчĕ Вышиванов начальник пулса тăракан шкултан пынă снайперсем пĕр талăк хушшинче 75 нимĕç оккупантне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Калинин фронтĕнче пысăк мар ушкăнсем хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ тата разведчиксем сăнаса-шыраса çўренĕ. Калистратов юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ противникăн оборонин районне кĕрсе кайса, унăн огневой точкисем ăçта вырăнаçса тăнине пĕлнĕ тата 40 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Çак операцие пурнăçланă чухне ушкăнăн командирне Калистратов юлташа амантнă. Виçĕ гитлеровец пирĕн командир патне ыткăннă пулнă, анчах та вĕсене боец Хабинов юлташ персе вĕлернĕ. Боецсем Калистратов юлташа çапăçу хирĕнчен çĕклесе тухса, хăйсен чаçне илсе таврăннă.

* * *

Гитлеровецсем совет войскисен тылне шпионсемпе диверсантсене яраççĕ. Пирĕн боецсем, питĕ сыхă тăрса, тăшманăн шпионĕсене тытаççĕ. Красноармеецсем Денисов, Черняк, Темишов тата Казанцев юлташсем çĕрле 7 гитлеровеца тытса чарнă, çав гитлеровецсем нимĕç самолечĕсене пирĕн паха çар объекчĕсем ăçта вырăнаçса тăнине сигналсем парса пĕлтерсе тăнă. Связист Гончаров юлташ пĕр шыв хĕрринче красноармеец формине тăхăннă 2 пулăçа асăрханă. Гончаров вĕсем пирки иккĕленнĕ. Вăл хăйне пулăшма икĕ боеца чĕнсе илнĕ те çав «пулăçăсене» тытса чарнă. Следстви тăвакан органсем çав çынсем нимĕç шпионĕсем пулнине палăртнă.

* * *

Калинин облаçĕнчи партизансен пĕр ушкăнĕ чугунçул станцийĕ çине хăюллăн пырса тапăннă. Совет патриочĕсем нимĕç гарнизонне вĕлерсе пĕтернĕ, комендатура çуртне тата чугунçул çинчи стрелкăсене сирпĕнтерсе янă. Партизансем трофейăсем тытса илнĕ тата темиçе çынна тыткăна илнĕ. Çав чугунçул тăрăх çўресси нумай вăхăта чарăнса ларнă.

* * *

Нимĕçсен уйрăм отрядри «Юнкерс-87» йышши самолечĕн пилочĕ — тыткăна лекнĕ унтер-офицер Макс Юст çапла каласа панă: «1942 çулти июньре эпĕ вĕçев шкулĕнчен вĕренсе тухрăм. Июлĕн малтанхи кунĕсенче мана Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта ячĕç. Çапăçма иккĕмĕш хут вĕçсе кайнă чухне манăн самолетăн моторне винтовкăран персе сиенлерĕç, манăн вара çĕр çине анса лармалла пулчĕ. Самолет ларнă вырăна красноармеецсем сывăхарсан, эпĕ хамăн револьвера пăрахрăм та, аллăсене тăратса тыткăна парăнтăм».

* * *

Нимĕçсен 2-мĕш танковăй дивизийĕнчи полевой жандармерин 82-мĕш отрядĕнчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Альберт Шмальфус çапла каласа панă: «Пирĕн отрядăн партизансене хирĕç темиçе хут та çапăçмалла пулчĕ. Нумаях пулмасть вăл отряда П. сывăхĕнче кĕрешекен партизансене çавăрса илсе пĕтерсе тăкма приказ пачĕç. Эпир вăрман патне пырса çитсен, партизансем сасартăк пăшалсемпе пулеметсенчен пеме тытăнчĕç. Нумай жандарма вĕлерчĕç. Хăшĕ-пĕри тарса хăтăлчĕç. Мана амантрĕç, унтан мана тыткăна илчĕç те медицина енчен пулăшу пачĕç, темиçе кун иртсен вара фронт линийĕ урлă каçарса, совет чаçĕн штабне илсе çитерчĕç».

* * *

Совет патриочĕсем оборона валли кирлĕ продукцисене ўстерсе пыраççĕ. Солтанов юлташ директор пулса тăракан заводра оборона валли кирлĕ пĕр паха хатĕрĕн детальне шаккаса тăвас вырăнне штампласа тума тытăнчĕç. Çав детале туса кăларасси вара 3—4 хут ўссе кайрĕ. Çапла ĕçлени 24 станока ĕçрен пушатса, вĕсемпе ытти япаласем тăвас ĕçре усă курма май пачĕ

Совет самолечĕсем Кенигсберг çине вĕçсе пырса тапăнни

Çак кунсенче пирĕн самолетсен пысăк ушкăнĕ метеорологи енĕпе йывăр условисенче Хĕвелтухăç Пруссири Кенигсберг хулинчи çарпа промышленность объекчĕсем çине вĕçсе кайса бомбăсем пăрахнă.

Бомбăсем пăрахнине пула хулара 38 çĕрте пушар тухнă, вĕсенчен 17 пушарĕ хула центрĕнче пулнă, вĕсенчен иккĕшĕ пысăк пушарсем пулнă. Хулан кăнтăр-хĕвеланăç хĕрринче тухнă 14 пушар вăхăтĕнче 10 çĕрте взрыв пулса иртнĕ. Хулан çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче 7 пушар тухнă тата 3 вăйлă взрыв пулнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Шкул ачисем колхозри ĕçр...

ШАМАРША. «Победа» колхозра колхозниксемпе пĕрле шкулсенче вĕренекен ачасем те тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕренекенсем отрядсем тунă. Тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатнă çĕрте вĕсем пысăк тимлĕх кăтартса ĕçлерĕç. Вĕсене ĕçре А. Павлова, О. Павлова комсомолка-учительницăсем ертсе пыраççĕ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

Воронеж районĕнче

Эпир вăйлăрах та вăйлăрах пырса çапатпăр

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, ию... 20-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Ворон... районĕнчи хаяр çапăçусем лăпла... маççĕ. Фашистсен бронеллă диви... зийĕсем, çĕршер самолечĕсем ... çирĕп оборонине çĕмĕрме ... реймерĕç. Халĕ çапăçусен тепĕр та... хăрĕ пуçланса каять. Çак вырăн... пуçарулăх пирĕн алла куçать. Сове... войскисем тăшмана утăм хыççăн утă... хĕссе хĕвеланăçнелле хăвалаççĕ.

Тăшман хаяррăн хирĕç тăрать. Хă... сен çухатнă позицийĕсене каялла т... вăрас тесе, нимĕçсем ĕнерпе паян т... миçе хут та атак туса пăхнă. Çапăç... сем халăх пурăнакан пунктсемшĕ... çирĕплетнĕ рубежсемшĕн, Дон урл... каçмалли вырăнсемшĕн пуçланса кай... нă. Фашистсен атакисем ăнăçма... Тăшмана каялла сирсе пăрахса, пир... чаçсем малалла куçнă.

Ĕнер Воронежран çурçĕр-хĕвел... нерех вырăнта питех те хаяр ça... сем пынă. Пирĕн пехотинецсем, тан... семпе тата авиаципе çыхăнса кĕреш... се, противника флангран вăйлăн пы... са çапнă. Вăйлă çапăçура пирĕн бое... сем нимĕçсен пĕр сыхăнăвне тат... фашистсен войскисен сыхăнăвне а... паштарса янă. Гитлеровецсем До... хĕвелтухăç енчи çула тата ун... меллĕ позицисене хăйсен аллинч... хăвармашкăн пĕтĕм вăйпа тăрăшн... Тăшман çапăçăва танксен пысăк уш... кăнĕсене кĕртсе янă. Хирĕç çапăç... пуçланса кайнă. Совет танкисчĕсе... противник хирĕç пырса çапнине сирс... янă, нимĕçсен 15 машинине çĕмĕрс... тăкнă.

Икĕ шыв хушшинче пынă çапăç... питех те çивĕчленсе кайнă. Унта пи... рĕн чаçсенчен пĕри танксем çинче... ăнăçлăн десант антарса хăварнă. Пи... рĕн автоматчиксем машинăсем çинч... ларса пырса фашистсен оборонине ка... вăлланса кĕнĕ. Тăшманăн тылĕнч... хаяр çапăçу пуçланса кайнă, вăл ça... пăçу паян вăйлăланнăçемĕн вăйлă... ланса пынă. Воронежран кăнтăртара... ри участоксенчен пĕринче пирĕн Н-с... подразделени, çĕрлехи тĕттĕмпе у... курса, шыв урлă ишсе каçнă. Ку ... раци ăнăçлă иртнĕ. Нимĕçсем хăйсе... войскисенчен татăлса юлас мар тес... Донăн тепĕр енне тарнă. Пирĕн тепĕ... подразделени противникăн 700 салта... кĕпе офицерне ытла пĕтернĕ, 3 тан... 2 бронемашина пĕтерсе тăкнă, трофе... йăсем тытса илнĕ.

Противник хирĕç тăнине çĕнтерс... пырса тата вăл хаяррăн контратакăсе... тунине сире-сире пырса, пирĕн боец... сем нимĕнрен хăраманнин тата ça... ĕсталăхĕн примерĕсене кăтартаççĕ. Утлă разведкăн политрук заместителĕ Туровский, боецсен пĕр ушкăнĕпе пĕрле, нимĕçсем тăракан яла çĕмĕр... кĕнĕ. Унта пирĕн танк пулнă, ăна фа... шистсем çавăрса илнĕ пулнă. Маши... на водителĕ аманнă пулнă, башеннă... стрелока вĕлернĕ. Пирĕн кавалерист... сем нимĕçсен пĕр пайне касса вакла... нă та, ыттисем сехри хăпнипе тар... саланнă. Политрук заместителĕ вара танка кĕрсе кайса, аманнă водителĕн суранне салтса çыхнă, унтан хăй башеннăй стрелок вырăнне тăнă. Тан... çĕнĕрен çапăçу хирне ыткăннă.

Тыткăна лекнĕ гитлеровецсем пир... артиллери ытла та хăрушă пени çин... чен калаççĕ. Пирĕн оруди расчечĕсе... нимĕçсене ялан шиклентерсе тăраççĕ. Противотанковăй тупăн командирĕ Стащенко темиçе кун хушшинче нимĕçсен 10 танкне тата боеприпассем тиенĕ темиçе автомашинине перс... çĕмĕрнĕ.

Пирĕн пехотинецсем фашистсен самолечĕсене сахал мар персе ўкереççĕ.

Иртнĕ çĕрле пирĕн вуншар самолетсем нимĕçсен шыв урлă каçмалли кĕперĕсене çĕмĕрсе çўренĕ, фронталла пыракан резервсене штурмланă, боеприпассен склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çĕрле вĕçсе кайса тапăннă вăхăтра летчиксем нимĕçсен горючи хунă икĕ складне пĕтерсе тăкнă, артиллерин 2 батарейине пусарса лартнă, сывлăшри çапăçура нимĕçсен 7 самолетне персе ўкернĕ.

Фирсов лейтенант тăватă хут вĕçсе кайса нимĕçсен 17 танкне, 2 орудине, боеприпассем тиенĕ 12 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата 70 гитлеровеца çити вĕлернĕ.

Çапăçусенче противник çынсем тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те питĕ пысăк çухатусем тўсет. Гитлеровецсен виллисем пур çĕрте те йăваланса выртаççĕ: канавсенче те, çул хĕррисенче те, тўрем вырăнсенче те. Нимĕç командованийĕ çапăçăва венгрсемпе мадьярсемпе пĕрле румынсене кĕртсе ярать.

Вăйлă çапăçусем халĕ те пыраççĕ. Воронежа çирĕп хўтĕлекенсем тăшмана татăклăн пыра-пыра çапаççĕ, нимĕç захватчикĕсене Дон патнелле хĕсеççĕ.

Г. КРЫЛОВ.

Чăваш литератури отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче

Совет Союзĕнчи ирĕклĕ халăхсен наципллĕ культурипе наципллĕ государственноçне пĕтерсе хурас, вĕсене нимĕçлетес, вĕсене нимĕç князĕсемпе баронĕсен чурисем туса хурас тĕллевпе пирĕн социализмлă аслă тăван çĕршыв çине ултавлăн тапăнса кĕнĕ фашистла вăрă-хурахсем хăйсем тытса илнĕ совет территорийĕ çинче малтанхи кунсенчен пуçласах пирĕн чечекленекен хулисемпе ялсене, ĕмĕртен упранса килекен культура пуянлăхĕсене, историллĕ памятникĕсене [illegible] çаратса ишĕлтерме тытăнчĕç.

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ совет халăхне тăван çĕршыв умне пысăк хăрушлăх пулса тăни çинчен асăрхаттарчĕ. Чăваш совет писателĕсем, мĕнпур совет интеллигенцийĕн [illegible] отрячĕ пекех, çав [illegible] çинчен тӳйса илчĕç.

Чăваш писателĕсенчен нумайăшĕсем вăрçăн малтанхи кунĕсенчех, алла хĕçпăшал тытса, тăван çĕршыва хӳтĕлеме, Октябрьти революцин çĕнтерĕвĕсене фашистла тискер кайăксенчен сыхласа хăварма кĕрешĕве тухрĕç. Писательсем çакна лайăх ăнланаççĕ: тăван çĕршыва тăшманран хӳтĕлени вăл — совет гражданинĕн ирĕклĕхĕпе чыслăхне хӳтĕлени, **чăваш совет писателĕ пулма тивĕç паракан правăна хӳтĕлени** пулса тăрать. Çавăнпа кунта писателĕн тăшмана хирĕç хурçă перо кăна мар, алла хĕçпăшал тытса кĕрешме лекет.

Чăвашсен паллă поэчĕ Уйăп Мишши, хăйĕн çамрăклăхри хĕрӳллĕ кунĕсене совет çĕршывĕн чиккисене хӳтĕленĕ çĕрте ирттернĕскер, тăшманăн броньăланă кĕтĕвĕсем килсе тапăннине фронтăн малти позицийĕсенче кĕтсе илнĕ. Хаяр çапăçусемпе каялла чакма лекнĕ кунсенче вăл тăтăшах малти ретре пулнă. Фашистла мерзавецсене хирĕç хаяр çилĕпе, çуламлă кӳрайманлăхпа тулнă унăн сăввисене пирĕн вулакансем пĕлеççĕ. Хĕрлĕ Çар ретĕнче пысăк ĕçсем туса пынипе пĕрлех, Уйăп Мишши хăйĕн вулаканĕсемпе хаçат урлă тăтăшах калаçать, вĕсене вăл тăшмана аркатса тăкма чĕнет:

Сурхи аслати пек хăватлăн, хаяррăн
Çулпуçăн приказĕ янрать: — Кăçалах
Тăшманăн зайне хуçмалла Хĕрлĕ
Çарăн,
Ăна пуçĕпех çĕмĕрсе тăкмалла!

(«Çулпуç приказĕ»).

Çамрăк поэт А. Алга, пĕлтĕрхи июнĕн 22-мĕшĕнче вăрçăн малтанхи сехечĕсенчех çапăçăва кĕнĕскер, пĕрре аманса сывалнă хыççăн халĕ татах çапăçура. Вăл — çирĕп командир, хĕрӳллĕ поэт.

Эпир ирĕк халăх, пĕр харăс тăрса,
Кĕрешпĕр вут-çулăм ăшне.
Эпир куçкĕретĕн калатпăр вăрçа
Ак, курăн-ха: хăшĕ — хăшне!—

тесе çырать вăл хăйĕн «Чи шанчăклă ĕмĕт» ятлă сăввинче. Малтанхи уйăхсенче Хĕрлĕ Çарăн каялла чакмалла пулчĕ пулсан та, эпир тăшмана пурĕ-пĕрех [illegible]

[illegible]

«Фронтри калавсем» авторĕ Ф. Ситта 1939—40 çулсенче белофиннсене хирĕç çапăçнă, халь вăл вăрçă пуçланнăранпа фронтăн малти позицийĕсенче. Вăл — писатель-коммунист, политработник, çар журналисчĕ, [illegible]

Граждан вăрçин вăхăтĕнче партизан Данилов-Чалдун [illegible]

[illegible]

Фронт умĕнхисем [illegible] Хĕрлĕ Çарти [illegible] ретĕнче эпир Н. Ильбек, Н. Колошкин (Чурбай), С. Минеев, И. Тукташ, А. Башкиров (Талвир), Л. Агаков, В. Алагер, М. Белов, И. Монс тата ытти юлташсене куратпăр. Вĕсем, хăйсен хаçатсенче [illegible] публикăри хаçатсене те тăтăшах [illegible]

Леонид Агаков фронтран «Пахтаван Мурат» ятлă чылай пысăк повесть тата 5—6 калавпа очерк ярса пачĕ. Унăн повеçĕ «Илемлĕ литературăн» 10—11-мĕш номерĕсенче пичетленет, калавĕсем уйрăм кĕнеке пулса тухаççĕ.

А. Башкиров (Талвир) фронтăн чи ответлă участокĕсенчен çырса янă очеркĕсемпе корреспонденцийĕсене «Комсомольская правда» хаçатра тăтăшах вулама пулать.

В. Долгов (Хударсем), Я. Ухсай, П. Хузангай, Хв. Уяр, Г. Савгай, М. Ястран, М. Кибек, К. Пайраш, Н. Волков, Вл. Бараев, Н. Евстафьев, К. Кольцов, А. Медведев тата ытти юлташсем Хĕрлĕ Çар ретĕнче командирсемпе политработниксем, рядовой боецсем пулса тăрса тăшмана хирĕç çапăçаççĕ.

Долгов (Хударсем) фронтран кĕскете паха калавсем, фельетонсем ярса тăрать. П. Хузангай вăрçă пуçланнăранпа нумай сăвăсем çырчĕ, отечественнăй аслă вăрçă геройĕсене кăлартса паракан «Аптраман-тавраш» ятлă пысăк поэма çырма тытăнчĕ, паллă героиня Зоя Космодемьянская çинчен «Таня» ятлă поэма çырса пĕтерчĕ. Вĕсем çитес вăхăтрах альманахра пичетленсе тухаççĕ.

Хĕрлĕ Çарти кашни писатель çапла кĕрсе ĕçлет. Кунтан та пахараххи тата — отечественнăй вăрçăн аслă самани çинчен кашни писатель пулас кĕнекесем валли пуян та тĕрĕ материалсем пухать.

Хальхи пек хаяр вăрçă вăл, паллах, çухатусăрсăр тулма пултараймасть. Чăвашсен паллă писателĕ лейтенант Андрей Петтоки тăван çĕршывшăн геройла çапăçса пуçне хунă. Унăн юлашки сăмахĕсем: — Тăван çĕршывшăн, Сталиншăн! — тесе çапăçăва чĕнекен сăмахсем пулнă.

Чăваш писателĕсем хăйсен юлташĕн вилĕмĕшĕн фронтра та, тылра та паттăррăн ĕçлесе тăшмана таварма тупа тăваççĕ. Писательсен йышне çĕнĕ çынсем хутшăнаççĕ. Юлашки вăхăтра эпир хаçатра час-часах Р. Шашков, М. Якимов, И. Столяров, Т. Майоров, И. Моисеев юлташсен очеркĕсене тĕл пулатпăр. Вĕсем пирĕн тăван литературăн пуянлăхĕсене малалла ӳстереççĕ.

Тылра та писательсем хĕрсех ĕçлеççĕ. Общество ĕçĕнче, производствăра пысăк ĕçсем туса пынипе пĕрлех, писательсем куллен çыраççĕ. Халăх поэчĕ-орденоносец Н. И. Шелеби фашистла ирсĕр çынçиенсене питлекен хаяр сăвăсем пачĕ. С. В. Эльгер «Тăван çĕршыв ывăлĕсем» ятлă пысăк произведени çырать. С. Шавлы вăрçă кунĕсенче «Йыхрав» ятлă сăвă кĕнеки кăларчĕ. А. Кăлган оборонăллă сăвăсемпе юрăсемсĕр, пĕр актлă пĕчĕк инсценировкăсемсĕр пуçне, халĕ граждан вăрçи геройĕ — Кадыков çинчен пьеса çырса пĕтерет. Н. Айзман вăрçă темипе икĕ пьеса пачĕ. Кунсăр пуçне вĕсем Максимов—Кошкинскипе пĕрле «Улăпсем» ятлă пьеса çырса пĕтерчĕ. Ăна халĕ Чăвашсен Академилле театрĕ [illegible]

[illegible]

А. ЭСХЕЛЬ.
Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ.

Комсомолкăсем «Сул çурĕççĕ»

ВАРНАР. Хаяр вăрçă пырать. Фронта валли анат-тимĕç ытларах та ытларах пама тăмалла. [illegible]

[illegible]

С. СЕЛЕЗНЕВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парткабинетăн хальхи вăхăтри ĕçĕсем

Çĕмĕрле районĕнчи парткабинет масса хушшинче агитаципе пропаганда ĕçне сарса пырас тĕлĕшпе чылай паха ĕçсем туса ирттерет.

Парткабинетăн лекторсен группи пур, унта 30 çын. Вĕсен шутĕнче предприятисенчи инженерсем, руководительсем, учительсем. Вĕсем уйрăм темăсем тăрăх рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци хушшинче тăтăшах лекцисем, докладсем туса ирттереççĕ. Кăçалхи май тата июнь уйăхĕсенче кăна лекторсен группи вăйĕпе лекцисемпе докладсем 85 хутчен ирттернĕ.

Хулари иккĕмĕш номерлĕ шкулти преподаватель Мельцер юлташ юлашки уйăх хушшинче хулари предприятисенчи рабочисемпе служащисене тата килхуçи хĕрарăмĕсене пĕтĕмпе 12 лекци вуласа панă. Вăл ирттерекен докладсемпе лекцисене рабочисем активлăн хутшăнаççĕ. Лектор ыйтăва тĕплĕн çутатса парать. «1812 çулти отечественнăй вăрçă», «Александр Невский нимĕç рыцарĕсене çĕнтерни» темăсем тăрăх ирттернĕ лекцисенче кăна темиçе çĕр çын пулнă.

Комбинатри инженер Егоров юлташ вулакан лекцисемпе докладсене те рабочисемпе служащисем пысăк активлăхпа çӳреççĕ. Юлашки вăхăтра вăл «ССР Союзĕ ютçĕршывсемпе çыхăну тытасси ӳссе çирĕпленсе пырать», «Социализмлă ăмăртун вăй-хăвачĕ», «Хĕрлĕ çар валли резервсем хатĕрлесси» темăсемпе докладсем ирттернĕ.

Пĕррмĕш номерлĕ ФЗО шкулĕнчи помполит Ероплан юлташ шкулта вĕренекенсем хушшинче 4 лекци туса панă. Вăл лекцисенче 1000 çын ытла пулнă. Кашни лекци хыççăнах вĕренекенсем лектора чылай ыйтусем панă, ыйтусем çине тивĕçлĕ ответсем илнĕ.

Штатлă пропагандистсенчен уйрăмăнах Тяпушкина тата парткабинет заведующийĕ Мосолов юлташсем масса хушшинче ытларах ĕçлеççĕ. Мосолов юлташ май тата июнь уйăхĕсенче докладсемпе лекцисем 14, калаçусем 5 хутчен ирттернĕ. «Новый период отечественной войны — период освобождения советской земли от гитлеровской нечисти» темăпа «Подборное», «Лесной огонек», «Красноармеец» колхозсенче докладсем туса панă.

Юлашки вăхăтра парткабинет ĕççынисем хушшинче докладсем, калаçусем туса ирттерес ĕçе ВКП(б) райкомĕн инструкторĕсене те явăçтарчĕ. Райком инструкторĕсем Петров, Чернова, Шигуров юлташсем июнь уйăхĕнче кашниех колхозниксем хушшинче докладсем туса панă. Докладсене колхозниксен хальхи вăхăтри ĕçĕсемпе çыхăнтарнă, докладсем колхозниксен ĕçри хастарлăхне хăпартрĕç.

Парткабинет хăйĕн ĕçне план тăрăх туса пырать. Лекторсемпе докладчиксене вăл малтанах темăсем парать, хăçан тата ăçта доклад тумаллине пĕлтерет, ăна доклада хатĕрленме пулăшать. Парткабинетрах докладчиксем валли кĕнекесен витринине, отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче ӳкернĕ фотоӳкерчĕксен выставкине организациленĕ, мĕнле кĕнекесем, журналсем, хаçатсем вуламаллине кăтартса çырнисем пур. Паллах, çаксем докладсемпе лекцисене хатĕрленме пысăк пулăшу параççĕ.

Çак уйăхра лекторсен группи вăйĕпе лекцисемпе докладсем 26 хутчен ирттермелле. Темăсем тĕрлĕрен. Шкул директорĕ Савельев юлташ «Немецкие фашисты—злейшие враги и разрушители Европейской культуры» темăпа «Труженик» тата «Спотара» заводсенчи рабочисене доклад туса пама хатĕрленет, инженер Егоров «Фронт и тыл Красной Армии—единый боевой лагерь» тема тăрăх лекцисем ирттереççĕ. Учитель Мельцер çак кунсенче «Суворов—великий русский полководец» тема тăрăх лайăх доклад туса пачĕ.

Анчах парткабинет ĕçĕнче çитменлĕхсем те çук мар. Вăл ялсенчи агитколлективсен руководителĕсемпе, çавăн пекех агитаторсемпе çителĕксĕр ĕçлет. Çавна пула уйрăм агитколлективсем (Тăванра, Егоркинăра) пачах ĕçлеме чарăннă. Кунсăр пуçне тата докладсем ирттерес ĕçе предприяти е учреждени руководителĕсене ытларах явăçтармалла, ялсенче вырăнти актива мобилизацилемелле.

Х. ЛИСИН.

Государствăна çăм парса татнă

КАНАШ. Ямашкасси ялсоветĕнчи колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ. Ялсоветри колхозниксем июлĕн 1-мĕш тĕлне 1942 çулта çăм памалли обязательствăна пĕтĕмĕшпех татса пултарчĕç.

И. МАКСИМОВ.

Çĕнĕ вите тунă

ЭЛĔК. Охверкăри «Хăват» колхозăн строительнăй бригади тимлĕн ĕçлет. Вырăнти материалсемпе усă курса бригада çак иртнĕ уйăхра 40 ĕне вырнаçтармалăх çĕнĕ вите туса лартрĕ.

М. КУСТИКОВ.

Ют çĕршывсенче

Англи авиацийĕ Германи çине вĕçсе пырса тапăнни

ЛОНДОН, июлĕн 20-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 19-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Бретань çыранĕ патĕнче противникăн хĕçпăшаллă икĕ суднине сиенленĕ. Каярахпа бомбардировщиксем Шокерипе Мазенгабри электростанцисене тата Сурçĕр Францири промышленность предприятийĕсене атакăланă. Истребительсен соединенийĕсем Па-де-Кале çыранĕ çине вĕçсе пырса тапăннă.

Француз партизанĕсен çĕнĕрен тунă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 20-мĕш. (ТАСС). Де Голль генералăн главнăй штабĕ Францин оккупациленĕ зонинче партизансем çĕнĕрен боевой ĕçсем туни çинчен хыпарсем илнĕ.

Нормандире француз патриочĕсем нимĕç войскисен çулпа пыракан колонни çине темиçе ручной граната пăрахнă. Гавр çывăхĕнче чугунçула сирпĕнтерсе янă, çавна пула пĕр поезда крушени пулнă. Бретаньре салтаксен столовăйне пĕтерсе тăкнă, унта гитлеровецсем лăк туллиех пулнă; тата çавăнтах пĕр трансформаторнăй подстанцие çĕмĕрнĕ.

Армантьерте (Лион çывăхĕнче) партизансем нимĕçсен 12 грузовикне пĕтерсе тăкнă. Лекэнри хурçă шăратакан заводра гусеницăсен 800 сыпăкне çĕмĕрнĕ, вĕсене нимĕçсен танкĕсем валли хатĕрленĕ пулнă. Юлашки кунсенче партизансем Лилльпе Брюссель хушшинчи чугунçул тăрăх çӳрессине икĕ хутчен чарса лартнă.

Париж районĕнче те, унта гестапо агенчĕсем питĕ нумай пулсан та, Дориопа Марсель Деан нимĕçсене сутăннă бандисен гитлерла агенчĕсене тăтăшах тапăнаççĕ, Дориопа Марсель Деа юлашки вăхăтра хăйсен сутăнчăкла ĕçĕсене вăйлăлатма хăтланнă пулнă.

Югослави партизанĕсем наступлени тăваççĕ

БЕРН, июлĕн 20-мĕш. (ТАСС). Югославири партизансен çарĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Боснире тата Герцоговинăра партизансем ăнăçлăн малалла наступлени туса пыраççĕ, Мостар тата Сараево хулисем хушшинчи пĕтĕм облаçа оккупантсенчен тасатаççĕ.

Коньица тата Мостар хулисем хушшинчи чугунçул линине 20 километр тăршшĕ пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкнă, çакна пула оккупантсем халăхран çаратса пухнă пурлăха Сараеворан турттарса тухма пултараймаççĕ.

Июлĕн 8-мĕшпе 9-мĕшĕнче партизансен батальонĕсем хаяррăн çапăçса Коньица хулине йышăнса илнĕ. Хăйсене ирĕке кăларакансене халăх питех те пысăк савăнăçпа кĕтсе илнĕ. Хулара пурăнакансем фашистсен юлашки пулемечĕсене пĕтерсе тăкма партизансене пулăшнă. Çамрăксем нумайĕшĕ партизансен çарне кĕнĕ, халĕ вĕсем тăван çĕре оккупантсенчен тасатас ĕçе хутшăнаççĕ. Нимĕçсен Коньицăра тытса илнĕ продовольстви запасĕсене выçă ларакан халăха валеçсе панă. Партизансем тытса илнĕ пуян трофейăсем хушшинче—25 паровоз.

Партизансен ытти чаçĕсем Сараеворан хĕвеланăç енче оккупациллĕ войскăсен тылне кĕрсе кайнă та Крешево хулине штурмласа йышăннă.

Гитлеровецсем Франци промышленноçне юхантарса яраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 19-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Францин оккупациленĕ пайĕнче Германин экономикăпа финанс контролерĕ çапла каланă: француз рабочийĕсене Германие яма пултăр тесе, Францире тата 1.600 фабрикăпа завод хупăнаççĕ, тенĕ. Гитлерла контролер çапла каласа хунă: малашне Франци промышленноçне тата çĕнĕрен чакаратпăр, тенĕ. Вăл каланă тăрăх, Германи предприятийĕсенче халь 170 пин француз рабочийĕ ĕçлет.

Америкăра ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе пухăнна конференци

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 18-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Мексикăра ялхуçалăх ыйтăвĕсене сӳтсе-явма пĕтĕм Америкăри конференци пухăннă. Çав конференцире ялхуçалăх продукчĕсем ытларах тумалли ĕçсене тата Америкăри çĕршывсем союзниксене вăрçăра пулăшас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене ырланă. Конференци, сăмахран, Америкăри çĕршывсенче çу кăлармалли, каучук тумалли тата медицина енĕпе паха ӳсентăрансене ӳстерме май пуррине тата целлюлоза тума пуррине тĕпчесе вĕренме каланă.

Конференци тата тавар сутмалли рынoксене тĕрлĕ çĕршывсем хушшинче пайлас тĕлĕшпе килĕшӳсем тума кирли çинчен каланă.

Финанспа экономика ыйтăвĕсене сӳтсе-явма пухăнна пĕтĕм Америкăри конференци

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 20-мĕш. (ТАСС). Июнĕн 30-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 10-мĕшчен Вашингтонра финанспа экономика ыйтăвĕсене сӳтсе-явма пухăннă пĕтĕм Америкăри конференци ĕçленĕ.

Америкăри республикăсен представителĕсем Америка континентне хирĕç агрессиллĕ ĕçсем тунă çĕршывсене вĕсен хальхи вăхăтра Америкăри республикăсенче тăракан пурлăхĕсене, фончĕсене тата хаклă япалисене парас ыйтăва пăхса тухнă.

Конференци хальхи вăхăтра агрессиллĕ çĕршывсенче е вĕсем пуç пулса тăракан территорисенче пурăнакан çынсен пурлăхĕсемпе тата хаклă япалисемпе усă курма тата вĕсене ытти çĕре яма кансĕрлемелли ĕçсем тума йышăннă.

Испани пароходĕсем тĕнĕл держависен подводнăй лодкисене нефть парса тăраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 20-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, англичансем Испанин Аргентинăра тăракан «Рига Гарсина» ятлă грузовой пароходне удостоверени паман, вĕсем ак мĕн пирки çапла тунă: Испанин «Альдекка» ятлă тепĕр пароходĕ Атлантика океанĕнче тĕнĕл держависен подводнăй лодкисене нефть парса тăнă, çавăнпа та «Рига Гарсина» парохода удостоверени паман.

Нимĕçсем Швецин Греци валли продовольстви илсе çӳрекен пароходне путарнă

ЛОНДОН, июлĕн 17-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Стокгольмран пĕлтернĕ тăрăх, Швецин ютçĕршыв ĕçĕсен министерстви июлĕн 16-мĕшĕнче касçхине çапла пĕлтернĕ: Швецин «Стуреборг» ятлă пароходне, 1.584 тонна водоизмещениллĕскере, Швецири Хĕрлĕ Хĕрес обществи Грецие продовольстви илсе çӳреме тытнă пулнă. Çав парохода Вăтаçĕр тинĕсре сывлăшран тапăнса путарнă. Пароход командинчен 19 çын пĕр хыпарсăр çухалнă. Пĕртен пĕр çăлăнса юлнă çын вăл—Португали çынни.

Рейтер агентствин тинĕс-çар ĕçĕсем çинчен çыракан сотрудникĕ çапла калать: Швецин «Стуреборг» ятлă пароходне, Грецие 2—3 пин тонна тĕштырă илсе çӳренĕскере, Германи самолечĕсем путарнă, тет.

Германи военщини Швецин нейтралитетне каллех пăснă

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 18-мĕш. (ТАСС). Июлĕн 11-мĕшĕнче Гетеборга Норвегин «Карна» тата «Вела» ятлă икĕ судни пынă. Кашни судно çинче командăсăр пуçне тăватă нимĕç салтакĕпе пĕр офицертан тăракан хурал пулнă. Нимĕçсем лайăх хĕçпăшалланнă пулнă. Кашни пароход çинче пулемет вырнаçтарса лартнă. Нейтральнăй çĕршывăн портĕнче хĕçпăшаллă суднăсем пулни правилăсене хирĕç пырать, çавăнпа Швецин таможня чиновникĕсем пулеметсене икĕ пароходĕ çинчен те илсе тухнă, нимĕçсене хĕçпăшалсăрлатнă, вĕсен боеприпасĕсене питĕрсе хурса пломба çакнă. «Карна» ятлă суднăн часах Швецин тепĕр портне тухса каймалла пулнă. Ун çинче нимĕç хуралĕпе норвежецсем хушшинче тавлашу тухса кайнă. Норвежецсем хăйсен хĕçпăшалсăр тăрса юлнă хуралçисене, вăл хуралçăсем персе пăрахассипе кăларатнă пулин те, чĕн писиххисемпе лайăхах ăшаласа илнĕ. Нимĕçсем кăшкăрни пĕтĕм портра илтĕннĕ. Июлĕн 14-мĕшĕнче Швеци влаçĕсем «Карна» парохода тепĕр порта кайма ирĕк панă. Судно çав порта тухса каяс умĕн Швеци полицийĕ ун çинчен нимĕç хуралçисене пиллĕкĕшне те антарнă, вĕсене судно Гетеборга таврăниччен пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма чарса лартнă.

Египетри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 20-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, юлашки 7 кун хушшинче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 4.000 çынна тыткăна илнĕ.

Империи войскисем фронтăн пур участокĕсенче те хăйсен позицийĕсене хăйсен аллинчех тытса тăраççĕ.

Англи бомбардировщикĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, противникăн çапăçу районĕнчен хĕвеланăçнерех вырăнти аэродромĕ çине вĕçсе пырса тапăннă. Противникăн çĕр çинче ларнă нумай самолетне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ. Пилĕк самолетне сывлăшра çапса ӳкернĕ. Фронтăн кăнтăрти секторĕнче противникăн танкĕсем пухăнса тăнă вырăнсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Вăйлă пушарсем тухни палăрнă

Турци суднине торпедăлани

АНКАРА, июлĕн 19-мĕш. (ТАСС). Анатоли агентстви çапла пĕлтерет: Вăтаçĕр тинĕсĕн хĕвелтухăç пайĕнче Турцин нефть турттаракан суднине торпедăланă. Çавна пула судно ăшăх вырăна ларса юлнă. Çав суднăна халь çăлса хăварма тăрăшаççĕ.

Тĕнĕл çĕршывĕсем Турци суднисем çине çаплах вăрă-хурахла тапăнаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 20-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: Турци влаçĕсем паллă мар судно Лесбос утравĕ çывăхĕнче Турцин моторлă судни çине çĕнĕрен тапăннине тĕпчеççĕ. Çав «паллă мар» судно Итали судни пулĕ тесе шухăшлаççĕ. Çавăн пек вăрă-хурахла тапăннине пула виçĕ кун хушшинче Турцин виççĕмĕш судни пĕтнĕ ĕнтĕ.

Тыткăна лекнĕ красноармеецсенчен гитлеровецсем тискеррĕн мăшкăллаççĕ

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 20-мĕш. (ТАСС). Гитлеровецсем тыткăна лекнĕ красноармеецсенчен тискеррĕн мăшкăллаççĕ. Вĕсене выçăхтарса вĕлереççĕ. «Гамбургер Фремденблатт» хаçат усçăнах йышăннă тăрăх, тыткăна лекнĕ красноармеецсене пĕр лагерьте «вилнĕ лашасен чĕрĕ какайне» çитереççĕ.

СУД

Ĕçрен пăрăнса çӳренĕшĕн

КАЛИНИНО. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен» йышăннă постановлени тăрăх, пирĕн республикăри колхозниксем çулталăкра 120 ĕçкунĕ ĕçлесе тумалла. Вăл шутран январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 15-мĕш хушшинче кашни колхозникĕн, колхозницăн 30 ĕçкунĕнчен кая мар, июнĕн 15-мĕшпе августăн 15-мĕшчен 30 ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе тумалла. Нумай колхозниксемпе колхозницăсем çакна чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Колхоз производствинчи обществăллă ĕçрен пăрăнса çӳрекенсем çине вĕсем тарăхаççĕ.

Тури Карачурари «Путь Ленина» колхозра ĕçleme пултаракан вăйпитти колхозницăсемех: Евгения Ивановăпа Мария Сидорова ĕçрен тăтăшах пăрăнса çӳренĕ. Е. Иванова колхозница колхоз производствинче куллен активлăн ĕçлеме пултарнă пулсан та, ĕçлемен, июнĕн 15-мĕш тĕлне вăл мĕнпурĕ те 14 ĕçкунĕ çеç ĕçлесе илнĕ. Çавăн пекех М. Сидорова колхозница та ĕçрен пĕрмаях пăрăнса пырса, июнĕн 15-мĕш тĕлне 14,35 ĕçкунĕ çеç ĕçлесе тунă.

Июлĕн 14-мĕшĕнче Калинински районри халăх сучĕ ку колхозницăсем çинчен колхоз правленийĕ панă заявление пăхса тухрĕ. Колхозри ĕçрен пăрăнса çӳренĕшĕн, ĕçкунĕсен минимумне пурнăçласа пыманшăн халăх сучĕ Евгения Иванова колхозницăна 6 уйăх хушши, Мария Сидоровăна 4 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлоттермелле тата уйăхра ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсенчен 25 процентне колхоз валли тытса юлмалла турĕ.

П. ГРИГОРЬЕВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКОЙ ХЛОПЧАТО-БУМАЖНОЙ ФАБРИКЕ

срочно требуются на работу мужчины и женщины, как имеющие квалификацию, так и желающие получить ее.

Оплата труда сдельная.

Рабочие обеспечиваются питанием в столовой и продовольствием через ларек фабрики.

Дети поступивших рабочих обеспечиваются местом в детском саду и в яслях.

Обращаться в отдел кадров фабрики по адресу: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, дом № 20.

3—3.

ЧУВАШСПЕЦТОРГУ

Требуются на постоянную работу: пом. бухгалтера, сапожники, уборщица. Обращаться: ул. Ярославская, д. 18, Чувашспецторг, клуб Динамо.

ЧУВАШСЕЛЬЭЛЕКТРО СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ:

электромонтеры всех разрядов и ученики для работы в колхозах и сельских местностях Чувашской АССР. Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, д. № 7, Сельэлектро

Дирекция.

3—3.

Республиканская контора Заготживсырье

доводит до сведения заинтересованных учреждений и предприятий, что контора приступила к заключению договоров на продажу живых племенных кроликов для организации кролиководческих ферм при подсобных хозяйствах. Заявки принимаются ежедневно до 25 июля с 9 ч. до 14 час.

Справки выдаются там же. Телефон 2-61. Адрес: ул. Ленина, 31, Республиканская к-ра «Заготживсырье».

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропогандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.

НТ 890